39-34



ИВАН ИВНИК



# Лирика

ЧĂВАШГОСИЗДАТ • 1939

ИВАН ИВНИК

# ЛИРИКА

ЧУВАШСКОЕ ГОСУДАРСТВЕННОЕ ИЗДАТЕЛЬСТВО
Чебоксары • 1939

*Обложка тата ӳкерчӗксем*
*Г. Харламппьевӑн*




Пурнăç —
кĕрешӳ

## АСЛӐ ТУПА

Астӑватӑп: йӑлтах куҫҫулленнӗ
Ҫамрӑкки те, ватти те,—
Ӗмӗрсен аслӑ генийӗ—Ленин
Куҫне хупнӑ... Йӑвӑр-ҫке питӗ...

Куҫҫулленчӗ завочӗ, уй-хирӗ,
Хуйхӑ, хуйхӑ—хулийӗн, ялӗн.
Анчах чӗресемӗр ҫирӗп,
Ҫирӗп пирӗн ҫулпуҫӑмӑр—Сталин.

Аслӑ Сталин ун чух тупа турӗ,
Ун сӑмахӗсем чӗрӗ паян та.
Эпӗр куртӑмӑр: ҫул-йӗр—тӳрӗ,
Пӑрнас ҫук ун ҫинчен нихӑҫан та.

Ленин вилчӗ. Анчах унӑн ӗҫӗ
Ӗмӗр-ӗмӗр вут-хӗмлӗн ҫуталӗ:
Ҫавӑ аслӑ тупа ӗҫе кӗчӗ,
Ҫӗршыва ертсе кайрӗ Сталин.

*1939.*

## ИКСĔЛМИ ВĂЙ-ХĂВАТ

Вăрçăра, походра пулайман эп,
Тăхăнса эп курман-ха шинель,
Анчах эпĕ-и ĕнтĕ халь манăп
Хасанри паттăрсен вăрçине.

Илĕртӳлĕ Совет çĕрĕ-шывĕ,
Пит ăмсаннă ăна самурай.
Кам килет ун çине—каймĕ сывă,
Тивтермеççĕ пирте хамăра.

Ăнланса-ши çавна, ăнланман-ши,
Анчах илтĕннĕ сасă: „Банзай!“
Пирĕн çеç хăраман ăнланманшăн,
Систерсе çеç калана: „Тăмсай!..“

Самурайĕ ăна сисеймерĕ
(Пăшалпа-тупăпа-çке ара!),
Эх, пуçларĕ—çĕршерĕн, пиншерĕн
Пуляпа ĕнтĕ вилĕм ярать...

Шикленмерĕ Советăн хуралĕ,
Кĕтрĕ çеç парасса вăл приказ.
Приказ тухрĕ: эппин тӳсĕр халĕ,
Хĕç-пăшал пирĕн питĕ заказ.

Ак, хĕмленчĕ хай вăрçă кăварĕ,
Снаряд çеç çурăлать пур çĕрте
Ун пек чух шăммине çеç хăварĕ
Самурай—эпĕр тухнă тĕлте.

Чăн та пулчĕ çаплах: шăммине çеç
Хăварайрĕ акса самурай...
Çавăн пек вăл Совет„кучченеçĕ",—
Тивтермеççĕ пирте хамăра.

Ма тесессĕн, пин-пин Винокуров,
Е Пожарский ӳсейнĕ пирте,
Ма тесен, пирĕн вăй пек вăй урăх
Пулайман, пулас çук ĕмĕрте.

Ма тесен, пирĕн халăх вăй-халĕ—
Нихăçан иксĕлми вăй-хăват,
Ма тесен,—пирĕнпе аслă Сталин,
Пирĕнпех вăл сыхлать çĕршыва.

*1939.*

## КĔПЕР

Пĕлетĕп аван: юррăн чапĕ-хисепĕ
Ялан вăй-хăватлăн, хăюллăн çиçет.
Кĕскен çеç сăнлашсăн кунта халĕ эпĕ
Испанире пулнă пĕр пĕчĕк ĕçе.

Мăн шыв хумханать. Чӳхенет вĕç-хĕррисĕр·
Ун урлă выртать асамат пек кĕпер.
Кĕпер çывăхне çывхарса çитнĕ ирсĕр
Тăшманăн роти аслă шыв хĕррипе.

Кĕпер варринче пĕтĕмпе те пĕр çын çеç.
Пĕр çын... Пулеметчик. Пĕр пуçăн—пĕччен:
„Кĕпер—пĕтĕм шанчăк. Вăл çук—ĕмĕт
сӳнчĕ“,—
Çапла шухăшлать çавă çын ун çинче.

Вăл çын—комсомолец. Вунтăххăрти çамрăк.
Ответлă хурал шанса панă ăна.

„Е хумăр кĕпер, юлать халĕ те хамăрăн,
Е—çуккă пулсан,—вилсе парăнам“...

Çук! вилĕм çинчен асилмест комсомолец,
Илет вăл тăшман çине тĕрĕс прицел.
Ӳкет ав пĕри. Теприне лекет пуля.
Каллех теприне ӳкерет вăл çитсе.

Йăванчĕç чылай... Анчах пур те мар çке.
Паллах, ротăра чĕррĕн юлнă нумай,
Вĕсем, урса кайнăн, пырса тапăнаççĕ,
Илеç кĕпере, пуçлаç кăшкăрма.

Отряд вырăнне кур—пĕр çын—пулеметчик:
(Отрячĕ кунта пулман та иккен!)
Часах йĕкĕте штык çине ак çĕклеççĕ,
Асап кăтартаççĕ пĕлми пуличчен...

Анчах хĕрлисенĕн пĕрре вăл девизĕ:
„Пуриншĕн—пĕриййĕ, пĕриншĕн—пурте“.
Ав, кур, пултаруллăн, пĕр шиклĕх тĕввисĕр,
Вĕсем сирпĕтрĕç тăшмана кĕпертен.

Куçне хупайман-ха герой-пулеметчик.
Алла, акă, илчĕç ăна тусĕсем.
„Юлаттăнччĕ сывă, калла чакмаллаччĕ“—
Шелеççĕ тусне юлашки хут вĕсем...

„Мĕнле-ха чакам эп патронăм пĕтмесĕр",
Тесе куçне хупрĕ герой ерипе.

Мăн шыв хумханать. Чӳхенет вĕç-хĕррисĕр.
Ун урлă выртать асамат пек кĕпер.

*1938.*

## ЧАПАЙ

Лăпкă мар-çке Урал шывĕ,
Ахăрать, йĕрет.
Урал шывĕ çийĕн харсăр
Пулемет кĕрлет.

Хура хумлăн, хĕрлĕ юнлăн
Пăтранать Урал.
Тăшмансем çитсе çывхарчĕç,
Килчĕç хуп-хура.

Тăшмана ялан çĕнтернӗ,
Çĕмĕрнĕ Чапай,
Сăртсем урлă, хирсем урлă
Каçнă вăл чаппа.

Казаксем-и çывхараççĕ,
Е килет Колчак,—
Чапая ялан та паллă
Çĕнтерӳ анчах.

Колчака вӑл хуса янӑ,
Ирӗкре—Урал.
Анчах вилчӗ пирӗн паттӑр—
Путрӗ авӑра...

Çитӗнет Совет çӗршывӗ,
Çӗкленет пӗрмай.
Çӗн тӗнчешӗн пуçне хучӗ
Командир Чапай.

Хулара халь юрӑ, юрӑ—
Юрӑ—ялсенче.
Асӑнса юрлатпӑр эпӗр
Паттӑрсем çинчен.

*1938.*

## ШАНЧĂКЛĂ ХУРАЛ

1.

Çăра тĕтрепе хупланать тавракурăм,
Тӳлек каç шăпăрт сассăр тăрать.
Анчах, пĕр тăшман та ан каç чикĕ урлă, —
Пограничник ялан вахтăра.

Пограничник курать,
Пограничник илтет—
Шанчăклă пирĕн çĕршывăн хуралĕ.
Вĕри-кун Кăнтăрта-и,
Е сивлек Çурçĕрте—
Пирĕн ĕçе вăл çивчĕ хураллĕ.

2.

Нихăçан тĕлĕрмест пирĕн мирлĕ застава,
Хураллать вăл Совет çĕршывне.
Нихçан тĕксĕмленмĕ çĕршывăн мухтавĕ,
Çутатать вăл мĕнпур тĕнчене.

Пограничник курать,
Пограничник илтет—
Шанчăклă пирĕн çĕршывăн хуралĕ.
Çĕр çинче-и, шывра-и,
Сывлăшра-и, çӳлте—
Пирĕн ĕçе вăл çивчĕ хураллĕ.

3.

Совет хуралне пулăшать пĕтĕм халăх:
Тăшмана вăл паллать пит аван.
Ак мĕншĕн эпир пултарулла та вăйлă,
Акă мĕншĕн—хăватлă ялан.

Пограничник курать,
Пограничник илтет—
Шанчăклă пирĕн çĕршывăн хуралĕ.
Кăнтăрла-и, çĕрле-и,
Е илемлĕ ирпе—
Пирĕн ĕçе вăл çивчĕ хураллĕ.

4.

Çĕршывăм, татах та хăюллăн эс çитĕн,
Тĕреклен кунран-кун, çулран-çул.
Пире ют-çĕршыв кирлĕ мар хăть пĕр шит те,
Хамрăнне те пĕр шит парас çук.

Пограничник курать,
Пограничник илтет—
Шанчăклă пирĕн çĕршывăн хуралĕ.
Хулара-и, ялта-и,
Савăтра, е хирте—
Пирĕн ĕçе вăл çивчĕ хураллĕ.

*1938*

# ТИНĔС

Тинĕс, аслă тинĕс, сарăл таçтанах,
Эп салам яратăп паян кун сана.
Манăн савнă тусăм пурăнать флотра,
Салама çитерччĕ эсĕ вăхăтра.

Тусăмçăм, савниçĕм, асаил мана,
Çĕмĕрт куçлă çамрăк трактористкăна.
Аслă хир тӳремĕ тинĕс пек паян,
Сарăлать-çке вăл та инçетрен, таçтан.

Асаил мана эс, йăвăр ан кала,
Кăмăлăм ман халь те, тусăм, сапалах.
Пирĕншĕн телейлĕ çакă çут тĕнче,
Çĕр çинче—эп савăк, эсĕ—шыв çинче.

Хуралса килсессĕн вăрçă кунĕсем,
Тухăпăр пĕр харăс, пурте пĕрлешсе.

Танк çине эп куçăп, эсĕ линкорпа...
Çапăçмашкăн хатĕр эпĕр тăшманпа.

Тинĕс, аслă тинĕс, сарăл таçтанах,
Эп салам яратăп паян кун сана.
Манăн савнă тусăм пурăнать флотра,
Салама çитерччĕ эсĕ вăхăтра.

*1938.*

## ВИҪĔ ПАТТĂР

*„Родина“ экипажне*

Ирĕ килчĕ калама ҫук капăр:
Пĕлĕт тăрă, янкăрах тавра.
Тухăҫа ҫул тытрĕҫ виҫĕ паттăр
Яланах хĕвеллĕ Мускавран.

Виҫĕ паттăр—виҫĕ чаплă хĕр вăл,
Пирĕн халăхсенĕ хĕрĕсем,
Виҫĕшĕн те пĕр тĕллев, пĕр кăмăл,—
Ҫĕнтермешкĕн тухуĕҫĕ вĕсем.

Шанчăклă вĕсеийĕн самолечĕ,
Лайăх алăра ĕҫлет штурвал.
Аялта юлаҫ хулийĕ, сачĕ...
Аялта юлаҫ хир-хир, ял-ял...

Ту-сăрт ҫийĕн, аслă шывсем ҫийĕн,
Тайга ҫийĕн каҫрĕҫ паттăрсем.

Çăмăр витĕр, вăйлă тăвăл витĕр
Кунĕн-çĕрĕн вĕçрĕçĕ вĕсем.

Паттăрсен тĕллевĕ пур-пĕр çирĕп,
Парăнмаççĕ паттăрсем нихçан.
Виçĕ паттăр, виçĕ совет хĕрĕ
Вĕçеве вĕçлерĕç пит аван.

Сĕм тайган илемлех мар кĕр кунĕ,—
Шурлăх, лачака, сивлек тĕтре...
Ниăçта та курăнмасть çын чунĕ,
Пĕр сас-чӳ те çук—хăть инçетре.

Вунă тавлăк ларнă хăйсем халлĕн
Паттăрсем çак чĕмсĕр тайгара.
Анчах пур-çке çăлăнăç, вăл—Сталин,
Вăл пурри кунта та кун парать.

Виçĕ паттăр—виçĕшĕ те сывă,
Йăвăрлăхран çăлчĕç вĕсене.
Саламлать паян Совет çĕршывĕ
Хăйĕн чаплă паттăрĕсене.

*1938.*

## ЧКАЛОВА АСĂНСА

Хумханчĕ, хускалчĕ халăх,
Хурлăх кашнин чĕринче:
Пиртен уйăрлать Чкалов
Декабĕрĕн хĕл сиввинче...

Пиртен уйăрлать Чкалов—
Боец, гражданин, командир.
Мĕн-ши паян эп калăп
Шартлама хыпар илтнĕ çак ир?

Мĕн-ши паян эп калăп?...
Сĕм хуйхă ăшне эп путап.
Çук пирĕнпе тек Чкалов—
Вĕçевçĕ, герой, депутат.

Çук пирĕнпе тек Чкалов—
Сталин ўстернĕ юлташ...

Хуллен усӑнать алӑ,
Ялавсем усӑнаççӗ йӑлтах.

Хуллен усӑнать алӑ,
Хуллен эп усап пуçӑма.
Сан пек пулмашкӑн, Чкалов,
Эпӗр паратпӑр сӑмах.

Сан пек пулмашкӑн, Чкалов,
Тупа тӑватпӑр паян.
Манмӗ сана пирӗн халӑх,
Асӑнӗ ӗмӗр, ялан.

Манмӗ сана пирӗн халӑх,—
Сӳнмеççӗ хӗвеллӗ ятсем.
Малалла эпӗр утӑпӑр, Чкалов,
Сан ятна та ялав пек йӑтса.

*1938.*

## СЫХЛĂХ ЮРРИ

Явăнасшăн пуç çинче
Чунилли çăханĕ.
Шухăшлать вăл: пур енчен
Юн ĕçмĕ тухам-и?

Советсенĕн çĕрĕнче
Вилĕм çӳретесшĕн.
Ун çине вăл пур енчен
Вăрçăпа килесшĕн.

Явăнаймăн, выç çăхан,
Кăлăхах супатăн,
Е ытах та, хăтлансан,
Вилĕмна тупатăн.

Вăйлă эпĕр çĕр çинче,
Сывлăшра та вăйлă.

Тинĕссем те, вăл енчен,
Пирĕнех мухтавлă.

Эпĕр—аслă вăй-хăват,
Çĕнтерӳллĕ эпĕр.
Пирĕн аслă çĕршыва
Пусăм та кĕреймĕр.

Явăнасшăн пуç çинче
Чунилли çăханĕ.
Явăнаймĕ,—çийĕнчех
Вилĕ персе анĕ!

*1938.*

---



# Анлă Атăл хĕрринче

## СЕНКЕР-СЕНКЕР ТĔСПЕ

Сенкер-сенкер тĕспе килсессĕн шурăмпуç,
Илемлĕн, аслăн çĕкленсессĕн шуçăм,
Сир тутлă йăхуна, ан тĕлĕр, куçна уç...
Епле паха тĕссем те пур-çке, тусăм.

Епле паха тĕссем, мĕн пек таса тĕссем
Çунаççĕ тĕнчере этемшĕн.
Анчах эпир нумай чух, поэтсем,
Çак тĕссене курмастпăр темшĕн.

Эпир пурнатпăр аслă ĕмĕрте,
Пирте çунать телейлĕх шурăмпуçĕ.
Апла пулсан, ĕçлер те хĕпĕртер,
Апла пулсан юрлар, тăванăм, уççăн.
*1938.*

## ÇИТРĔ ÇУР...

Çитрĕ çур. Каллех туятăп:
Ăшă çил хавас çӳрет.
Эп куратăп: анлă Атăл
Еййре.

Кăнтăртан килсе иртеççĕ
Кайăк хурăн картисем.
Вĕсене халь илĕртеççĕ
Кӳлĕсем.

Çĕмĕртсем мухтавлăн çурчĕç
Шурă-шурă çеçкине.
Иленет-çке вĕлле хурчĕ
Ун çине.

Кĕтӳсем çӳреççĕ тулăх,
Курчĕç кĕтнĕ ырлăха:

Ешӗл тумлӑ аслӑ улӑх,
Сарлака.

Ҫуркунне. Каллех туятӑн:
Ӑшӑ ҫил хавас ҫӳрет.
Эс куратӑн: анлӑ Атӑл
Ейӳре.

*1938.*

## ИРХИ АТĂЛ

Анлă Атăл лăпкăн хумханать,
Хум çапать ем-ешĕл çырана.
Эх, аван-çке Атăл хĕррине
Уçăлма тухмашкăн ирхине.

Ăшăтса катрамлă хумсене
Çут хĕвел шевлийĕ чӳхенет.
Мĕнешкел паха, мĕн пек ансат
Кимĕсем ишеççĕ ярăнса.

Хум çапать ем-ешĕл çырана—
Пароход шур акăш пек анать:
Иксĕлми телейлĕ çынсене
Вăл каллех тулли телей сĕнет.

Анлă Атăл çийĕн ян та ян
Савăнăç юрри çӳрет паян.
Ахаль мар-çке Атăл хумĕсем
Мускавах çитеççĕ çĕкленсе!

*1938*

## КАЙĂКХУРСЕМ КИЛЕÇ

Кайăкхур çуначĕ çинче килчĕ—
Çитрĕ илĕртӳллĕ çуркунне.
Йăпшăнать унпах çурхи нӳр çил те,
Йăпатса поэтăн чĕрине.

Çепĕç кĕвĕ: тăрнасен сăрнайĕ
Илтĕнме пуçларĕ тӳпере.
Ĕнтĕ халĕ шухăшлап пĕрмай эп:
Саламу та çитĕ пурпĕрех.

Тюльпансем шап-шурă пуль халь сирĕн,
Ырă шăршлă пулĕ левкойсем.
Эп кĕтме пуçларăм кашнă ирĕн,
Пирĕн те час пулĕç вăл тĕссем.

Пĕр эрне-и иртĕ, ытларах-и,
Шурă кĕмĕл çакĕç çĕмĕртсем.

Кам-ха калĕ: „кулянса ларах эс—
Çавтери илемлĕх илĕртсен“.

Винограддлă, персиклă Туркмени—
Аякра йăмраллă Юхмаран.
Хушăра юлташлăхсем пĕтмен пек
Асма килтĕн эс ялан.

Çамрăк ĕмĕт-шухăшăмăр пирĕн
Улăхри çăлкуçĕ пек таса:
Ачӟшлать пире хаваслăх ирĕ,
Пур çĕрте те ăшшăн лăпкаса.

Кайăкхур çуначĕ çинче килчĕ—
Çитрĕ илĕртӳллĕ çуркунне.
Йăпшăнать унпах çурхи нӳр çил те,
Йăпатса поэтăн чĕрине.

*1938.*

## САРӐЛСА ВЫРТАКАН АТӐЛА

Сарӑлса выртакан Атӑла
Тинкерсе, ача пек, савӑнап.
Ҫамрӑк чух вӑл—чупту, ытала,
Ҫамрӑк чух юратса сав ӑна.

Ейӳри Атӑл пек—ӗмӗтсем,
Шухӑшсем—унӑн хумӗсем пек.
Хавхалат кӑмӑлна, ҫӗкленсем
Пурнӑҫпа, пурнӑҫ кунӗсемпе.

Сарӑлса выртакан Атӑла
Тинкерсе, ача пек, савӑнап.
Ҫамрӑк чух вӑл—чупту, ытала,
Ҫамрӑк чух юратса сав ӑна!

*1937.*

## ТĂВАНĂМ, ТУСĂМÇĂМ, ЧĔКЕÇĔМ

Тăванăм, тусăмçăм, чĕкеçĕм,
Каллех, каллех аса килен.
Эс—ман çĕршывăн ешĕл тĕсĕ,
Эс—çĕршыври тулли илем.

Çĕршывăн уйăхĕ, хĕвелĕ
Сăн кĕртнĕ, тантăшăм, сана.
Чеченлĕх пур сан, пур хĕрӳллĕх,
Ăс-пуç та çирĕп яланах.

Яштак хăваллă—анлă Атăл,
Тӳп-тӳрĕ хăмăшлă—Сĕве;
Сан пĕвĕнте ялан куратăп,
Туятăп эпĕ вĕсене.

Ак тепĕр сăнлăх: кăн-кăвакăн
Кăвакарать вăл, Çарăмсан.

Сан куçусем калаç, таванăм,
Ун умĕнче те парăм сан.

Саркайăксем юрлаççĕ пирĕн
Çуркуннепе Çавал çинче.
Сан сассуна илтетĕп, хĕрĕм.
Вĕсен илемлĕ юрринче.

Тăванăм, тусăм, савнă летчик,
Çĕршыв тĕрекĕ, çĕн илем.
Çыратăн эс: „Ан ман, ан ютшăн,
Эс те пĕрмай аса килен".

*1938.*

## ЯРИ ÇЕÇ УÇĂЛĔ ТЕ АЛĂК

Яри çеç уçăлĕ те алăк,
Эп кĕрĕп тусăмçăм патне.
Çут электрицă пек çуталăп,
Çуталăп эпĕ ун ятнех.

Ман кантăкра чипер хĕрпе пĕр
Шап-шур çиттиллĕ хурăнсем.
Хăть такамран та савăк эпĕ
Лăпкă ирпе юр курăнсан.

Курсам, тăванăм, хăрпăк хыççăн,
Курсам—туйăрăм-ăвăса.
Паян ирпе, ирех тăруçăн,
Эп çыртăм, акă, сăвăсем.

Мана кĕтет юлташ редактор,
Тухса утатăп шухăшпа.

Куратăп эп: епле ку тапхăр
Ӳсетĕн эсĕ, Шупашкар!

Куллен ӳсен тăван столица,
Ална кӳрсемччĕ, чăмăртам.
Сан çыннусем туллин юрлаччĕр,—
Телей, хаваслăх—хамăрта!

*1934.*

---



## УТМАÇУЛ

Юхса выртать чĕркĕмĕлĕн
Илемлĕ Илепер,
Юхать вăл янкăс кĕвĕллĕн
Хăй пĕлнĕ çулĕпе.

Вĕлле хуртне йăпатнă пек
Шап-шура хуратул,—
Мана кĕтет çураçнă хĕр,
Хĕлхемлĕ юрату.

Çуртри пуссийĕн, улăхăн
Эп турăм утмаçул.
Мана туртать вăл ырлăхăн,
Чĕнет-çке, чăтма çук.

Юратупа хĕмленнĕскер,
Чун-чĕрепе çунса,

Пĕр хĕр патне вĕрентĕм-çке
Эп кӳршĕ колхоза.

Юхать, чупать, васканă пек,
Илмелĕ Илепер.
Сар хĕр патне васкатăп эп
Çак шывăн хĕррипе.
*1938.*

## ТĂРĂ КУЛĔ ХĔРРИПЕ

Тăрă кӳлĕ хĕррипе
Яранса ӳсет хăва,
Яштак хăва, шур хăва.
Каçĕ лăпкă та чипер...
Каччă—савнă хĕрĕпе
Кимĕпе хуллен шăвать,—
Хумхатса юратăва.

Усăнать яштак хăва,
Перĕнет вăл шыв çинех,
Кӳлĕ шăппăн чӳхенет.
Хĕрпе каччă чуптăваç,
Хумхатаççĕ тăр шыва...
Хĕрпе каччă пĕр-пĕрне
Юратаççĕ ĕмĕрнех.

*1938.*

## КИЛ ÇУММИЙĔН, САД ÇУММИЙĔН

Кил çуммийĕн, сад çуммийĕн
Васкаса юхать çырма.
Хĕрпе каччăн пур çуннийĕ—
Килĕшсессĕн курнăçма.

Сулхăнах сада кĕретĕп,
Пуçтаратăп улмине.
Тĕлпулатăп эп хĕре те,
Хамăн чунăм савнине.

Вĕрене çулçи кĕteслĕ,
Канвертланă çыру пек.
Уйрăлатăп та тем тĕслĕ
Шухăшлатăп çĕрĕпе.

*1938.*

## ТӲПЕРИ ТĔЛПУЛУ

Сенкер шел пек пĕлĕт айĕн,
Çӳллĕ-çӳллĕ тӳпере,
Хĕрпе каччă—икĕ тантăш
Хирĕç пулчĕçĕ пĕрре.
Икĕ тантăш—икĕ летчик
Ак илеççĕ палласа,
Полюсран вĕçет пĕриййĕ,
Тепĕриййĕ—полюса.
Икĕ летчик—хĕрпе каччă
Юратаççĕ пĕр-пĕрне.
Чуптума çеç халь вĕсенĕн
Майĕ çук-тăр ахăрнех
Анчах, çав вăл юратăвăн,
Майĕ пур-çке пур-пĕрех:
Саламлашрĕç икĕ тантăш,
Унка çырчĕç тӳпере.

*1938.*

## МАН КАНТĂКРА

Ман кантăкра питрех илемлĕн
Шенкер тĕспе çунать сирень.
Пĕр ун çине пăхса хисеплĕн
Эс тĕлпулатăн çак ире.

Ун çеçкине татасшăн эсĕ,
Ăна тиресшĕн кăкăрна.
Ах, ан хăтлан! Пĕлес килсессĕн,
Унпа, тен, хуйхă çаврăнать.

Пĕлместĕп эп, тен манăн кўршĕ
Курма пултарĕ кармашсан.
Вара сана вăл хуйхă кўрчĕ,
Унчух хурпулĕ, тусăм, сан.
*1938.*

## КОРЗИНĂПА ЧЕЧЕК ЙĂТСА

Корзинăпа чечек йăтса,
Садран тухатăн эс утса.
Сана куратăп та чĕре, тем
Вырта-тăра пĕлмест пĕрре те.

Сан хыçупа чипер мелпе
Юлма пĕлмест, утать мĕлке.
Пĕлсемччĕ, тантăшăм, тăванăм,
Хăть сан мĕлкӳ пуласчĕ манăн!
*1938.*

# ЮРĂ

Çутă шуçăм шевлине
Чунăм саврĕ ирхине.
Шуçăм тĕсĕ çутăлать
Ырă тантăш сăнĕнче.

Кĕмĕл уйăх çуттине
Килĕштертĕм каçхине.
Уйăх тĕсĕ çутăлать
Манăн тантăш сăнĕнче.

Сар хĕвелĕн ăшшине
Эп саватăп кулленех.
Хĕвел тĕсĕ çутăлать
Савнă тантăш сăнĕнче.

*1938.*

## КАТЮША

*М. Исаковскирен*

Ҫӗмӗртсем, ав, ҫеҫкеленчӗҫ ӑшшӑн,
Тӗтресем ӳкеҫҫӗ шыв ҫине.
Шыв хӗрне тухать-ҫке халь Катюша
Кӑмӑллӑ та тулӑх ирхине.

Уҫӑлма тухать хӗр—ҫепӗҫ юрӑ
Ҫӗкленет ун ҫамрӑк чӗринче.
Пур-ҫке хӗрӗн савӑк та хӑюллӑ
Савнӑ тусӗ ҫакӑ ҫӗр ҫинче.

Юх эс, юрӑ, ҫамрӑк хӗр юрриҫӗ,
Ҫутӑ хӗвелпе пӗрле ҫӳре,
Ҫаврӑнах хирсем-вӑрмансем ҫийӗн
Тусӗ хуралта тӑран ҫӗре.

Ярӑн эсӗ, чикӗ ҫийӗн ярӑн,
Хӗрӗ пултӑр йӗкӗтӗн асра;
Ҫӗршыва сыхлатӑр вӑл хастарӑн,
Хӗрӗ ун юратӑва—усрать.

*1939.*

## САВРĔ-ÇКЕ ÇАМРĂК ЧĔРЕМ

Пурнăçĕ пирĕн—илем,
Пурнăç пире ачашлать.
Тухăç, ав, ылттăн хĕлхем,
Ылттăн хĕлхемĕ—ташлать...
Саврĕ-çке çамрăк чĕрем.

Лăпкă та тулăх ирпе,
Ешĕл, таса çуркунне,
Аслă çаран хĕррипе,
Тухрăм эп тусăм патне.
Саврĕ-çке çамрăк чĕрем.

Шăнкăр та шăнкăр кăна
Чĕрĕ çăлкуçĕ кĕрлет,
Чĕрĕлĕх, ырлăх сунать,
Çĕнĕ кунçул еверлех.
Саврĕ-çке çамрăк чĕрем.

*1939.*

# ХĔРĔ

Вĕр-çĕнĕ юр пек кăмăллăччĕ эсĕ,
Кĕрхи илем пек çепĕçчĕ те ырăччĕ.
Йĕтес вăлтса каланăччĕ: „йĕтессĕм!“
Пĕрре эпир. Манман пулсассăн юрĕччĕ.

Сана ман памаллаччĕ пĕр парне çеç,—
Вăл—тăхăр пушăт çăпатийĕ терĕмĕр.
Сан—пурçăн енчĕкчĕ. Анчах пĕрне те
Тума пĕлмермĕр темшĕн, савнă хĕрĕмĕр.

Эп çăпата хуçмашкăн хăнăхмарăм,
Эс енчĕк тĕрлеме тытмарăн пулĕ çав.
Юрıть, эппин. Вăл хире-хирĕç—парăм.
Вĕсем кăчух çаплипех те юлĕçĕ.

*1937.*

## КӐРЕНӐ

Вĕл-вĕлех вĕçет сар çулçă,
Тăрнасен карти иртет.
Ылттăн кĕр, хăна пек, килчĕ,
Вашават çӳрет пирте.

Уйрăлсаччĕ эпĕр иккĕн
Çакăн пек чух, кĕркунне,
Пилеш йăвăç хĕрлĕ-йĕпкĕн
Тĕс çаксассăн пӳрт умне.

Кĕркунне те, çурккуне те
Çырăп, терĕн, эрнерен.
Анчах эпĕ кӳренетĕп
Пĕр çыру та илменрен.

Çулçăсем вĕçеççĕ акă,
Эп пăхатăп кантăкран,

Çырупа килсе тухас пек
Письмоносец ăнсăртран.

Анчах кĕтнĕ письмоносец
Шав иртсе каять пиртен.
Куçăмсем ман шывланаççĕ...
Тусăм, мантăмăр, иккен!

*1936.*

# ЙĔЛТĔР ЙĔРĔ

Шурă юрĕ
Çурĕ, çурĕ
Çула тухрĕç çунапа.
Хĕл пуçланчĕ...
Эсĕ пурĕ
Сивĕ тăмăн чунупа.
Шурă юр
Тĕремĕ тăрăх
Кайăн эсĕ йĕлтĕрпе.
Салхуланмăн
Эсĕ кăлăх,
Чунна уçăн эс пĕрпек
Йĕлтĕр йĕрĕ,
Икĕ йĕрĕ
Çумма-çумăн—малалла...
Пурнăç сулĕ
Хамрăн пирĕн
Çавăн пек-çке санпала.

*1938.*

# ЮРАТУ

Ешĕл харсăр чĕре юратма чарăнсан,
Пурăнма кирлĕ мар, ан ăмсан.—

Пулмасан юрату,
Савăк мар çутă кун:
Пултăр санăн яту,
Илĕртмест чапĕ ун.
Пулмасан юрату,
Çук вăл урăх телей:
Сан пулмасть хăвату
Çитме шаннă тĕле.
Пулмасан юрату,
Ĕмĕт çук тĕнчере;
Камăн пур юрату,
Вăл ĕçлет, çĕнтерет.

Юрату—вут çунни, юрату—вут тивни,
Юрату—вăл телей,—тетĕп эпĕ, Ивник.

*1938.*

---


Пейзаж

# ÇĂМĂР

Манмастăп—улăх çийĕн
Ем-ешĕл çуркунне
Лĕп шыв пек ăшă çăмăр
Каçкăлĕм çунине.

Пыратăп улăх тăрăх,
Çавал хĕррипеле.
А çăмăр, ăшă çăмăр
Çăвать—çурхи тивлет.

Пин-пин тумлам мерченĕн
Укет вăл çĕр çине.
Ăна пăхмасть хĕвелĕ,—
Сапать çут шевлине.

Пыратăп та куратăп:
Ах, мĕнешкел чипер

Çавал çине асамлăн
Тухса тăраль кĕпер!

А çăмăр, ăшă çăмăр
Хуллен-хуллен иртет...
Çам пек тĕссем нумай-çке
Çавал çинче, пирте.

*1938.*

## КРЫМА ПЫНИ

Сывă-и, Крым? Лайăх чупать-и?
Лăпкă ир. Сăртсем. Тĕтре.
Пыратпăр эпир. Час-ши Ливади?
Çывăхра-ши, е инçетре?

Пыратпăр эпир: Янгас тата Ивник.
Çулĕ вара!... Ырă та шофер аван.
Кĕç курăнчĕ тинĕс йăлтах вут тивнĕн:
Халь тухан хĕвеле вăл çăвать.

Ав, тинĕс çине пăхса юлчĕ Алушта.
Часах ума тухрĕ—Гурзуф.
Хумхантăмăр иккĕн те: чăн-ши? ниуштă?
Ку çĕрсене А. С. Пушкин курса!

Каятпăр татах. Обрăзсем ĕнтĕ хатĕр.
Лăпкă ир. Сăртсем. Тĕтре.
Часах пире йышăнчĕ—Ялта, Ливади.
Каларăмăр иккĕн те; лайăх питрех.

*1937.*

## ХĂНАНА ЧĔННИ

Çыратпăр çыру. Савăнар, хĕпĕртер.
(Мĕнле халĕ пулăпăр типĕ?)
Панулми, панулми—чăмăртанчĕ пирте,
Çитĕнсе пыран хĕрĕн кăкри пек.

Пĕр-ик эрнерен, тепрер уйăхран
Çитет чаплăран чаплă вăхăт:
Чие—хĕвел пек курăнать—йăмăхран,
Панулми те хĕрĕлĕ хăвăрт.

Яла, хăнана эсĕр килĕр ун чух,
Ан ютшăнăр, питĕ кĕтетпĕр.
Сĕткенлĕ анис сиен кӳрес çук,
Чие йăлăхтармĕ, тетпĕр.

Яри уçпăр-и сад пахчи алăкне,
Ырлăх сана—панулми пиçнĕ тапхăр!
Каллех савăнтар эс колхоз халăхне,
Сана эпĕр—ĕмĕр саватпăр.

*1937.*

## КАНАШ—ШУПАШКАР

Пит аван, асамат çĕкленсессĕн,
Çӳремешкĕн Çавал хĕррипе,—
Çавал урлă халь хамăр çĕкленĕ
Çуллахи асамат пек кĕпер.

Çавал çийĕн иртет ăшă çăмăр,
Аслати авăтать аякра,—
Аслати пек кĕрлет хурçă пуйăс,
Кĕпер урлă каçать тулхăрса.

Çуркунне, шуçăмла, курнă пулĕ
Кайăк-хур сукмакне ир çинче,—
Ун пекех пирĕн халь тимĕр çул пур
Канашпа Шупашкар хушшинче.

*1938.*

## ЁÇ УМĔН

Шăркара ырашĕ,
Тулă шăркара,
Кашласах ӳсет-çке
Хылчăксăр пăри.
Ак, вырмашкăн эпĕр
Тухăпăр карах,
Уй-хирте çĕкленĕ
Аслă ĕç юрри.

Çитмĕл урлă каçнă
Вăйпитти мучи
Малтанхи кĕлте пек
Сухалне шăлса:
„Тулăх пирĕн пурнăç,
Эпĕр ун хуçи!“—
Тесе вырма пуçлĕ
Йышпала тăрса.

*1938.*

# КĔРКУННЕ

Шĕтĕрнек карта çаралчĕ,
Ĕнтĕ витĕр курăнать,
Хăмла пултранкийĕ халь тек
Çулçăпа витмест ăна.

Сулхăн сад ăшне те витĕр
Витерет паян хĕвел.
Улмуççи калать: „Халь çитĕ..
Ларăпăр каллех тĕвве“.

Çунмаллах çунать пилешĕм
Çӳçĕ-пуçĕ, ал-ури.
Ун çинче сĕткен-пĕрлешĕм
Çулăмпах çунать мар-и.

Кӳлĕ çийĕн кашнă ирĕн
Явăнать çăра тĕтре.

Перкеленчĕ хăмăш тирĕ,
Ырханланчĕ вăл ӳтрен.

Астусам, пейзаж пит ырă:
Çырана хум çитерсе,
Аслă шыв тӳремĕ тăрăх
Ярăнаççĕ катерсем.

Эс куран, каллех кĕрхи тĕс,
Тӳпере, çӳлте-çӳлте—
Сывлăшри парад пек тикĕс
Кайăк-хур карти иртет.

Чӳхенет, вылять кас кӳлĕм
Инçетре хĕвел тĕрри.
Вăл калать:—Татах хĕрӳллĕн
Тулăх август килтĕр-и!

*1938.*

## ПĂШĂЛ-ПĂШĂЛ ПĂШĂЛТАТРĔ

Пăшăл-пăшăл пăшăлтатрĕ,
Чăшăлтатрĕ аслă сад.
Ылттăн тумĕпелен ĕнтĕ
Уйрăлать вăл йăсласа.

Пăшăлтатрĕç, чăшăлтатрĕç,
Вĕçсе ӳкрĕç çулçăсем.
Каламарĕç-ши вĕсем те:
Сывă пулăрах, тесе?

Çулçă тăкрĕ те шăпланчĕ...
Садăн ĕçĕ çавă çеç.
Пилешсем кăна тĕтреллĕн
Вăйсăр вут пек тĕлкĕшеç.

*1937.*



# Поэзия

# ПОЭТ

*Г. ТУКАЙРАН*

Ватăлатăп эп те, вăхăт иртнĕçем,
Çурăм курпунланĕ, пĕрĕнĕç питсем.

Чун-чĕрем, çапах та, юлĕ çамрăках,
Кăмăлăм та пулĕ çутă, сарлака.

Вут-хĕлхем тамалмĕ манăн ăшăмра,
Ĕмĕрлĕх вăл юлĕ янкăс сăввăмра.

Чĕремре ялан ман—ешĕл çуркунне,
Сивĕ хĕл чараймĕ унăн таппине.

Кĕлĕсен тĕтриййĕ хуплайман мана,
Янăравлă пулĕ юррăм яланах.

Ватăлсан та выртмăп кăмака çине,
Сăввăмри вут-çулăм çуйĕ кулленех.

Килсе çиттĕр вилĕм, çаптăр вут-ама,
Пур-пĕр пăрахаймăп эпĕ юрлама.

„Эпĕ кайрăм—эсĕр юрлăр тĕнчере!"—
Теейсе хăварăп эп унчух сире.

*1938.*

## ЧĔВĔЛ ЧĔВĔЛТЕТĔ КАЙĂК

Чĕвĕл чĕвĕлтетĕ сарă кайăк.
Çулçă тăкма пуçлĕ аслă сад.
Анчах эп-и халĕ сарăхайăп
Кирлĕ-кирлимаршăн йăсласа.

Утăмлатпăр йышпала, нумайăн,
Шанчăклă та уçăмлă—тĕллев.
Пурăнас килет пурăннă майăн,
Пурăнас килет, ĕçлес килет.

Çырмара йăр-яр ишет-çке пулă.
Шыв çинче выляççĕ чĕкеçсем.
Ĕмĕр ешĕл пулĕ аслă улăх—
Телее вăл пирĕн тивĕççсем.

Каççерен эп сăвă çыркалатăп,
Хайкашса ларатăп пĕр пĕччен.
Анчах эп пĕр паллă япала та
Çырайман-ха, темшĕн, паянччен.

Эп сăнап: çăлтăр ÿкет пиг янтă,
Пăнчăн-пăнчăн çутă хăварса.
Паяна темех çырман пулсан та,
Пур пеккине кăмăл тăвăрсам.

Ир те, каç та çырăп сăвă-юрă,—
Çулăмпа хĕмленĕ яш чĕрем.
Çĕршыва ман çепĕç сас та юрăх
Пулĕ, тетĕп, аслă тĕнчере.

*1934.*

## САМАХ ВЫРĂННЕ

Юлташсем! Нумай-и вăл, сахал-и,
Лайăх-и, начар-и вăл,—çырап.
Паллă мар çеç, аслă критик—халăх
Усала-ши хурĕ, е—ырра.

Хам пирки калатăп эп. Пĕлесчĕ,
Мĕнлерех пахалĕç сăвăça?
Кам пĕлет, нумай та иртмĕ, эс, тен,
Пĕр сăмахсăр юлăн манăça?

Çав хăрушă. Пултарать пулма та.
Йăпатмасть, паллах, ун пек шăпа,—
Каçсене каçла та, кун кунла та,
А унта—яту та çук, шăпах...

Астăвас пулать. Çампа та пирĕн
Халăхпа чи çывăх пулмалла.
Халăха çĕклетĕр сăвă-лира,
Этеме вăл йыхăртăр мала.

Халăхпа пулмашкăн тивĕç эпĕр—
Юнпала, чунпа-чĕрепеле.
Унашкал пулсассăн пирĕн ĕмĕр
Пулĕ вăрăм. Çутăлĕ. Пĕлеп.

*1937.*

## ÇĔНÇУЛ CĂВВИ

Кашни çул, çитсессĕн çакă вăхăт,
Çурçĕр янратсассăн Кремльтен,
Ман чĕлхем сăмах-юмахшăн сăхă,
Такăнма пăхать калас тĕлте.
Пур вăл штамп: Мухтав та... сывă
пултăр!"
Е çавсем пек виç-тăват сăмах.
Эп калап: „Ан сӳнтĕр пирĕн çăлтăр,
Чир-чĕр ан чакартăр сассăма!"
Акă—çурçĕр. Ав, курант кĕввийĕ.
Çĕнĕ çул çĕкленчĕ çĕр çине.
Эп калатăп: „Каялла—киввийĕ,
Малалла çул парăр—çĕннине!"
Çурçĕр. Куркама çĕклетĕп эпĕ.
Эп сире каллех телей сĕнеп.
Юлташсем, сире пула хисепĕм,
Кăшт ĕçер—çĕнçулăн кăмăлне!

*31. XII 1938.*


Юрăсем

## ÇУРХИ ЮРĂ

Шурă-шурă çĕмĕрт çеçкинче
Юрă пек янрать çурхи тĕнче.
Пирĕн пурнăç та пĕр çавăн пек,—
Пурăнатпăр ырлăх çĕрĕнче.

Юрă саланать инçе-инçе,
Юрă шăранать-çке пур енче.
Чĕрене çĕклет, чуна савать
Çакă юрă—çамрăклăх çинчен.

Сассăмăра уçрĕ çуркунне,
Юррăмăр та пирĕн ун ятне.
Пурте тулăх пирĕн юрăран—
Улăхĕ, уй-хир, вăрман-ĕшне.

Юр пек улмуççиллĕ садсемпе,
Çĕнĕ ĕç кĕвиллĕ хирсемпе,

Хуларан, ялтан, пур кĕтесрен
Юрă çĕкленет сÿнми хĕмпе.

Çĕршыва мухтав, мухтав сана,
Пирĕншĕн çуралнă самана.
Советсен телейлĕ çĕрĕнче
Юрă, юрă янрĕ яланах!

*1938.*

## ХУРĂНЛĂХРА КУККУК АВĂТАТЬ

*Халăх юрри майлă*

Хурăнлăхра куккук, ай, авăтать,
Хурăн тăрри силленет.
Хурăнах та тăрри силленнипе
Вăштăр-вăштăр çил вĕрет.
Вăштăрах та вăштăр çил вĕрнипе
Хирти тырă хумханать.
Хиртиех те тырă хумханнипе
Пирĕн колхоз савăнать.

*1938.*

# ПĔРЛЕ ӲСНĔ ТАНТĂШСЕМ

Атăл хăви—шур хăва,
Яштак хăва, шур хăва,
Çурхи шывпа чӳхенет,
Хăйĕн пĕвне ӳстерет.

Пирĕн колхоз хĕрĕсем,
Пĕрле ӳснĕ тантăшсем,
Атăл çинчи хăва пек,
Çурхи ешĕл хăва пек.

Каччисем те япăх мар,
Пултаруллă, пит хастар—
Пĕр колхозра ӳснĕрен,
Килĕштерсе ӳснĕрен.

*1938.*

## И КАЙӐКХУР

И кайӑкхур, и кайӑкхур,
И кайӑкхур картисем
Ай-люна!
Кӑнтӑр енчен килеҫҫӗ —
Ай-люна!
Шыв кукрисем, шыв кукрисем,
Шыв кукрисем шыраса,
Ай-люна!
Ҫурхи ӑшӑ кунсенче.
Ай-люна!
И ҫамрӑк чун, и ҫамрӑк чун,
И ҫамрӑк чун тантӑшсем
Ай-люна!
Ҫурхи вӑйя тухаҫҫӗ—
Ай-люна!

Тантӑшсене, тантӑшсене,
Тантӑшсене юратса,
Ай-люна!
Çурхи вӑйӑ эрнинче.
Ай-люна!

*1938.*

# АСЛӐ УЛӐХ ТӐРӐХ

*Романс*

Аслӑ улӑх тӑрӑх та эп ҫӳрерӗм
Сывлӑм шӑрҫаланнӑ вӑхӑтра.
Юриех те вӑйя тухас терӗм
Савнӑ сар ачапа калаҫма.

Ташӑ-юрӑпала янрать аслӑ урам,
Карталанса выляҫ ҫамрӑксем.
Савнӑ сар ачана эп курмарӑм,
Чунӑм салхуланчӗ, тантӑшсем.

Мӗншӗн-ха тухмарӑн, тусӑм, хура куҫӑм,
Мӗншӗн эс пулмарӑн ман ҫумра?
Эп вылярӑм, култӑм, кӑмӑл турӑм,
Анчах эс каймарӑн асӑмран.

*1938.*

## УЛМА ЙĂВĂÇ АВĂНАТЬ

Улма йăвăç авăнать те,
Улма йăвăç авăнать—
Улми тулăх пулнăран.
Çамрăк чунăм савăнать те,
Çамрăк чунăм савăнать—
Савни Çара кайнăран.

Шăпчăк юрлать улăхра та,
Шăпчăк юрлать улăхра—
Сасси килет шыв тăрăх.
Хĕрлĕ çарти тусăмран та,
Хĕрлĕ çарти тусăмран—
Салам килет хут тăрăх.

Аслă улăх тăршшипе те,
Аслă улăх тăршшипе—
Çӳлĕ çаран çутăлать.
Манăн савни инçетре те,

Манăн савни инçетре—
Совет çĕрне хураллать.

Çунса тăран шуçăма та,
Çунса тăран шуçăма—
Чаршав карса чарас çук.
Пирĕн аслă çĕршыва та,
Пирĕн аслă çĕршыва—
Тăшман каçса кĕрес çук.

Çуркуннехи вĕренен те,
Çуркуннехи вĕренен
Паллах çулçă сарасси.
Хĕрлĕ çарти маттурсен те,
Хĕрлĕ çарти маттурсен
Паллах орден илесси.

*1938.*

## УЯВ ЮРРИ

Савса хулана, яла,
Аслă уяв кунĕнче,
Юррăмăр кайтăр инçе.
Ешĕл таса çĕр çинче
Вĕлкĕш эс, хĕрлĕ ялав!

Хаваслăх тулать хĕве,
Савăнăç—пирĕн питре,
Çукка никамăн тĕтре.
Çўллĕ, сенкер тўпере
Савăн эс, çутă хĕвел!

Тухатпăр йышпа, кал-кал
Эпĕр уяв кунĕнче,
Куртăр, ăмсантăр тĕнче.
Пĕтĕм тĕнче умĕнче
Ялкăш эс, пирĕн вăй-хал!

Пурнатпăр аван, тату,
Туслăх, юлташлăх пирте,
Сталин—çулпуç—хĕпĕртет.
Пирĕн хавас ĕмĕрте
Сарăл, ан сӳн, юрату!

Çӳрет çĕршывра телей,
Хурлăх, асаплăх çук,
Ĕмĕрлĕх типрĕ куççуль.
Ешĕр татах çулран-çул,
Çитĕн эс, пирĕн телей!

*1939.*

## ТУПМАЛЛИ

### *Пурнăç — кĕрешӳ*

*стр.*


Аслă тупа . . . . . . . 7
Иксĕлми вăй-хăват . . . 8
Кĕпер . . . . . . . . . 10
Чапай . . . . . . . 13
Шанчăклă хурал . . . . 15
Тинĕс . . . . . 18
Виçĕ паттăр . . . . . 20
Чкалова асăнса . . . 22
Сыхлăх юрри . . . . . 24


### *Анлă Атăл хĕрринче*


Сенкер-сенкер тĕспе килсессĕн шурăмпуç . . . 29
Çитрĕ çур. Каллех туятăп . . . . 30
Ирхи Атăл . . . . . . . 32
Кайăкхурсем килеç . . . . 33
Сарăлса выртакан Атăла . . . . 35
Таванăм, тусăмçăм, чĕкеçĕм . . . . 36
Яри çеç уçăлĕ те алăк . . . . . 38

### *Юрату*


Утмаçул . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 43
Тăрă кӳлĕ хĕррипе . . . . . . . . . . . . . . . 45
Кил çуммийĕн, сад çуммийĕн . . . . . . . . 46
Тӳпери тĕлпулу . . . . . . . . . . . . . . . . . . 47
Ман кантăкра . . . . . . . . . . . . . . . . . . 48
Корзинăпа чечек йăтса . . . . . . . . . . . . 49
Юрă . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 50
Катюша . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 51
Саврĕ-çке çамрăк чĕрем . . . . . . . . . . . 52
Хĕре . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 53
Кӳренӳ . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 54
Йĕлтĕр йĕрĕ . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 56
Юрату . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 57


### *Пейзаж*


Çăмăр . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 61
Крыма пыни . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 63
Хăнана чĕнни . . . . . . . . . . . . . . . . . . 64
Канаш—Шупашкар . . . . . . . . . . . . . . . 65
Ĕç умĕн . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 66
Кĕркунне . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 67
Пăшăл-пăшăл пăшăлтатрĕ . . . . . . . . . 69


### *Поэзия*


Поэт . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 73
Чĕвĕл чĕвĕлтетĕ сарă кайăк . . . . . . . . 75
Сăмах вырăнне . . . . . . . . . . . . . . . . . 77
Çĕнçул сăвви . . . . . . . . . . . . . . . . . . 79

*Юрăсем*

Çурхи юрă . . . . . . . . . . . . . . 83
Хурăнлăхра куккук аватать . . . . . 85
Пĕрле ӳснĕ тантăшсем . . . . . . . . 86
И кайăкхур . . . . . . . . . . . . . 87
Аслă улăх тăрăх . . . . . . . . . . . 89
Улма йăвăç аванать . . . . . . . . . 90
Уяв юрри . . . . . . . . . . . . . . 92

Редактор С. В. Эльгер.
Техн. редактор Ф. Яковлев.

Уп. Чувашглавлита № 1783.
Сдано в произв. 17/VI-39 г.
Подп. к печати 29/IX-39 г.
Ф. бум. 60x92 1/32. Об'ем 3 п. л.
Заказ № 470. Тир. 3000 экз.

Типография № 1 НКМП ЧАССР
г. Чебоксары.

Цена 2 руб.

ИВАН ИВНИК

ЛИРИКА

СТИХИ

Госиздат ЧАССР
Чебоксары • 1939